Капкăн

Йанвар

2-мĕш №

Кулак: Елĕк те хĕсеҫҫĕҫ. Кăҫал ҫураки ҫинҫен калаҫнă май пĕтерсехумах пуҫларĕҫ. Каплах хĕссен пыршă-пакартам та йулас ҫук.

Çураки умĕн



Кулак колхоса хирĕç шăлне хăйрат.

Ăнман ђейелĕх.

Каç тĕттмленсе килнĕ вăхăтра сивĕпе шăнса хытнă çĕрйĕркĕлекенсем Ђеппотайĕвă йатлă ђиркўллĕ йал патне çывхарнă. Вĕсен хăвăртрах ăшă пўрте лексе, пĕçерекен ђей стакканне алла тытас килнĕ. Ђеппотайĕвра вĕсен калама çук пысăк ĕç тумалла: ку ђиркўллĕ йалта пурăнакансенђен çурри кулаксем, вĕсене аласа тăкса, ђухăнпа вăтам хресђенсене колхоса пĕтĕçтермелле. Ђăнахах та пысăк ĕç ĕнтĕ вăл.

Ђеппотайĕвра пурăнакан халăх çĕрйĕркелекенсем (мишавайсем) пырассине малтанах пĕлнĕ, çавăнпа çур йалĕ çав тери кĕтнĕ хăнасене хирĕç тухрĕ. Ђеппотайĕври ђухăнсем колхос йенелле калама çук хытă туртăннă.

Ђеппотайĕври кулаксем хăйсене ыр пулас çуккине сиссе, ђухăнсенђен айаккарах тăнă. Йалти ђи ђейе, таçта та шăтарса кĕме пултаракан кулак Лоппатĕн Савукĕ хăйĕн сăмала пек хура вăрăм сухалне алла тытса, тем çинђен тарăн шухăша кайса тăнă. Çав вăхăтрах вăл, ђухăнсем çĕрйĕркелекенсемпе калаçнине, вĕсене хăйсен килĕсене çавăта-çавăта кайнине куç айĕн пăхса тăнă.

Çĕрйĕркелекенсем килнипе хумханнă Ђеппотайĕвă лăпланнă хыççăн, урам хушшисем пушанђĕç. Лоппатĕн Савукĕ çĕлĕкне çĕре пăрахса хыттăн кăшкăрђĕ:

— Ну, тăвансем! Епĕ çав тери ђаплă план шухăшласа кăлартăм, çĕрйĕркелекенсене шухăшламаллăх пур унпа. Айтăр ман пата „çуттине“ ĕçме, калаçăпăр..

Кулаксем Лоппатĕн Савукĕ патне утрĕç.

* *

Колхос ваљђи çĕр уйăрса пама хатĕрленес ĕç аван пынă. Çĕрйĕркелекенсем тепĕр пĕрикĕ кун ĕçлесен пĕтермелле. Колхоса йалти кулаксемсĕр пусне ђухăнпа вăтам хресђенсем пурте çырăннă вĕт-ха...

Анђах таçтан, кĕтмен çĕртен ђăрмав сиксе тухрĕ. Йал тăрăх:

— Çĕрйĕркелекенсем халăха улталаççĕ, кирлĕ пек çĕре уйăрса парасшăн мар, вĕсене вçаткка тыттарнă, тенĕ сасăсем шăва пуçланă. Ку сăмахсем тĕрĕс марри куç умĕнђех пулнă. Çапах та йалти телекраф—çăл кутĕнђи кăнђала умĕнђи елексем хăйсен ĕçнех тунă. Хресђенсене:

— Сире никам та улталамаст, ĕçе мĕнле кирлĕ çавăн пек туса пыраççĕ, тесе ĕнентерме темĕвле тăрăшсан та усси пулман.

— Мĕншĕн есĕр ђей ĕçеттĕр, тата тĕрлĕ апатçимĕçпе хăналанаттăр,—пĕлетпĕр епĕр сире... тенĕ сасăсем.

Такам, тăшман аллипе туса лартнă шанђăксăрлăх çтенийĕ çĕрйĕркелекенсемпе йал хушшине пырса ларнă. Кулаксем ахăлтатса кулнă. Лоппатĕн Савукĕ алтан пек каçăрăлса утса çўренĕ.

...Çĕрйĕркелекенсен ирĕксĕрех колхоса оркансатсилес ĕçе пăрахса Ђеппотайĕвран тухса каймалла пулнă.

* * *

Йал каллех ĕлĕкхи пурнăçпа, колхос туса ырă пурнăç тăвассине шанмасăр пурăнма пуçланă.

Пĕрре, ытлашши çĕре пытарса усранăшăн теплерен лекнĕ Лоппатĕн Савукĕ хыттăн кăшкăрса йаđĕ:

— Ах! тăна кĕмен çара хырăмсем!.. Епĕ сирĕншĕн çĕрйĕркелекенсене ахалтен йалтан тасатса кăлартăми!?. Çавăншăн мĕн пур пек ытлашши çĕре хамах пама ыйтатăп епĕ... тенĕ.

Ђухăнпа вăтам хресђенсем хăйсем йепле кулак вăлтине çакланнине тинех тишкĕрсе илнĕ...

Çав куннех лавсем тытса района çĕрйĕркелекенсене илме йатарласа йанă.

— Хаљ ĕнтĕ, пире кулаксем улталаймĕç, пирĕн колхос пулатех, тесе калаçнă пĕр-пĕринпе Ђеппотайĕври ђухăнпа вăтам хресђенсем.

Мамăнттăв С.

Наккассем парас умĕн

Пуху шăпах пухăнса çитрĕ. Мушиксем пурте вĕрен çакки пек куккăр ђĕлĕмĕсене мађђаналла каçăртса, тапак çук май пиçнĕ хăмла çунтараççĕ. Хăшĕсем:

— Камăн пур пĕр ђĕлĕмлĕх тапак, тархасшăн парăрха? Иртенпе тапак туртмаç. Пĕр çăвар тути те çук,—тесе йăлăнаççĕ.

Пысăкках та мар пўртре ђĕлĕм тĕтĕмĕ лăнках тулђĕ. Пĕр çăмăлтарах, икĕ кило туртакан пуртă та ђĕлĕм тĕтĕмĕнђе пăйавпа кăкармасăрах çакăнса тăмалла. Савăт тăрпи пек паклаттараççĕ мăнтарăн çыннисем.

— Тăхтарах туртăрха!—кăшкăрат килхуçи.

Халăх кĕрлет. Лаптак кашта урлă йаруплан вĕçсе каçсан та, сассине илтеймĕн. Пурте çăварĕсене карнă. Тем ыр хыпар кĕтеççĕ.

— Пуху уçăлнă тесе шутлăпăр,—терĕ кĕтесрен пĕр сас.

Преçитиум та суйларĕç Ĕçе тытăнђĕ пуху.

— Иалпулăшкомсене суйлас май, пайан пирĕн хамăн йал пулăшкомăн ĕçĕсем çинђен отђот итлемелле. Отђот тумашкăн Çтаппан пиђђе сăмах илет,—терĕ пуху пуçлăхĕ.

— Мэн каламаллийех ге нумайах мар. Çавăнпа та еп сире нумайах та тытса тăмăп,—тесе пуçларĕ пулăшком пуçлăхĕ.

— Виçĕм çули йэ тăватăм çул пире пулăшкома суйласа хăварнăђђĕ. Унтан вара епĕр такки пурăнса. Иалтан ниçта та кайман, конешнă. Халĕ çак суйлав умĕн пире шыраса тупрĕç. Ирĕксĕрех тупăнмалла пулђĕ. Пире виçĕ ђлентан суйланăђђĕ те, пĕр ђленне нийепле те тупаймарăмăр вара. Трахвинђђи çав, те Макçăмђђĕ. Çук вĕсем марха! Леш Лăпă Микихверĕђђĕ пулмалла.

— Есĕр пулнăи пулăшком Çтаппан пиђђе?—терĕ алăк патĕнђен пĕри

— Епĕр пулнă çав. Епĕр!

— Пулăшком пирĕн йалта та пулсаи?

— Пулмасăр ара. Пулнăçке!

— Пулăшком пуррине пĕлмен пек калаçатăр. Ара курманиха есĕр, пĕркунне кăмсамулсен çтена хаçаđĕ çине: „Ыйхă ђирĕпе ђирленĕ пулăшкома Атăл хĕрне санатторине йусанма йамалла,—тесе çырнăђђĕ. Картинккине тата... сарлака та хĕрлĕ хăлхаллă пулăшком пуçлăхĕ ерешмен картишĕнђе çывăрса ларнине кăтартнăђђĕ. Çавсем пулнă та епĕр,—терĕ сĕтел хушшинђе мăн сут çынни пек ларакан пулăшком çыруçи

— Çавсе-е-е-ем пулнă-ă-ă-ă!!! саççум пĕлмен те епĕр!

— Акă ăçта пулнă пулăшком!!!

— Хо хо-хо-хо-хо!!!

— Йулташсем, тăхтăрха есĕр. Епĕ çуррине те каламанха. Ирĕк парăрах ĕнтĕ,—терĕ, тата мĕн каласа парасши тесе шутласа тăракан пулăшком пуçлăхĕ.

— Вăг мĕн тата! Пулăшком фонтне тума тырă пухма та йышăннăђђĕ халăх, анђах хусамăр итлемен кăна. Пирте мар ĕнтĕ айăп. Хусамăрта. Хуларан хутсем килкелеççĕ, вĕсене вулакаласа. Райуна канашлусене кайкаласа, татах каймалла пулĕ тен. Пирĕн фонт тени 30 кĕрепенкке ыраш пур терĕç. Хамăр курман та хăт, калаđђĕç. Е-е-е! Ђимĕрха. Тата пĕр хутђен пирĕн пата райунран пирĕннисен пуçлăхĕ килсеђђĕ хăйамат. Хăвăрах та курнă пуђ. Мĕнле калас. Шыçмакрахскер... еппин. Хырăмĕ те пĕђĕккех мар. Куçлăх тăхăннă...

— Тата мĕн калас. Пакка нимех те çук. Ну çапах та спаççипă сире, йулташсем. мана çавăн пек ĕçлĕ вырăна суйласа хăварнăшăн. Еп пĕтертĕм,—терĕ пулăшком пуçлăхĕ.

— Нута, нута! Какшĕ, ђапсăр вырăн мар! Пођђотнăй!..—кĕрлерĕ пуху

— Но вот, тăхтăрха есĕр, йулташсем, ман кăшт каласа пĕтерменни пур,—терĕ пулăшком çекреттарĕ.—Епĕр ĕçлемен те пурте çавăн пек пулĕ темелле мар. Епĕ пĕрре хулана карăм та, айай унта хăш пулăшкомсем ĕçленине калаççĕ. Иал йалĕнђе хытă ĕçленĕ вĕт. Акă Пителе пулăшкомех: çил арманĕ лартнă, çăм тапакан машшин, тата улмапа сутă туса 1500 тенкĕ тупăш илнĕ. Пыр та калаç вĕсемпе. А вăл пирĕн çук. Епĕ пĕтертĕм.

— Отђотсем пĕтрĕç, камăн ыйтусем пур?—терĕ пуху пуçлăхĕ.

— Мĕтри карђăкĕнне, хăй вилмесĕрех, мĕншĕн пурлăхне пулăшком илме шутланă ĕнер?

— Пăхма кăна кайнăха. Карђăкĕ вилсен пулăшкомăнах пулаť те вăл!..

— Пулăшком ĕçе ђĕртме шутлани?

— Шутланă ара, унсăрăн пулати?

— Пулăшком хăйсене хăçан суйласа хăварнине пĕлети?

— Каларăм вĕт сире, виçĕмçули, йе тăватăм çули тесе... Ну çав таврашра еппин.

Ыйтусем вăрахăнланђĕç. Халăх та сахалланђĕ.

— Пулăшкома малашне ĕçлемешкĕн наккассем парас пулаť,—терĕ пуху пуçлăхĕ, куçĕсене выђђаткаласа.

Шĕпĕр-шепĕр ларкаласа йулнă халăх, пуçĕсене тăрнасем пек çĕклерĕ.

— Вăт, халăх та пулаť. Пуху пĕтиђђен ларасшăн мар. Вĕсене ђăмласа хыптарасшăн, а вĕсем пур, çăтасшăн та мар!—тет Çтаппан пиђђе, урайĕнђе йăванса выртакан çынсем çине пăхса.

Иулашки вăйа пухса, ђылай вирлĕ наккассем парса хăварђĕç пулас çĕнĕ пулăшкома.

Çапла савăнтарса тĕлĕнтерђĕ, вăратсан та вăранмасăр, сар хĕрĕн ирхи ыйхи пек, тутлă ыйхăпа çывăрнă Лапра-кассинђи (Иет. р.) пулăшком, суйлав хумĕпе вăраннă хыççăн. Малашне ун пек çывăрмĕ тетпĕр.

Майак.

Вулав çурђĕ пуçлăхĕн шăлнĕ.

— Ку испађ шăлнĕ пайан кунĕпе „Капкăн" вулаť.

— Вăл вуламасť вĕт, çынсем ан вулађђăр тесе тытса лараť. Вăл „Капкăн" çинђе пирĕн испађ кулаксемпе туслă, тесе çырнă.

Çэр. Ђернов.

Шăтăк портфĕлпе.

— Ывăлăм мĕнле сан портфĕлў кĕтесси шăтăк? Виçĕмкун шăтăк марђђĕçке.

— Епĕ ăна хам йури шăтартăм. партти пилеђĕ çухалђĕ теме. Турăш хыçĕнђе выртса шăшисем кăшланă та кĕтессине. **Сакм.**

Ман сăвă.

Ылттăн вĕлле хурђĕсем
Хурăн çине сыранă;
Иалти мĕн пур ђухăнсем
Коллектива çыранă. **Т. С.**

ХĂРУШĂ КУН

Хăйар шўрпи нумай çинĕрен Хăйаршўрпи Хветĕр тесе хушамат панă ăна йал çынинсем. Ашшĕ унăн хăйар шўрпи пулман, конешнă—Упрам йатлă пулнă. „Хветĕр Упрамђă“ темелле пулнă та ăна ашшĕ йађĕпе ђĕнес пулсан.

Пĕре çав Хăйаршўрпи Хветĕр вăрман касна çĕртен калама çук хытă ĕшенсе таврăннă. Ĕшенмесĕр, вăрман касасси—хăнара-ĕçкĕре ларасси мар. Ывăнтарат. Ывăннăскер, иртерех пулсан та, Хветĕр канма выртнă. Канма выртсассăн, куçа хупасси çинђен шухăшланă вăхăтрах, хăлтăр! тутарнă сасса илтсе картах сиксе илмелле пулнă унăн.

— Х лтăр! Шан-шан!..

Хветĕр хăранипе ура çине сиксе тăнă.

— Хăлтăр-р-р!.. Шăн-шан!.. Шарт!..—тутарнă каллех пўртре.

— Воспоти!—тесе сăхсăхса илнĕ Хветĕр.

— Ђăнкăрт!—илтĕнсе кайнă кăмака умĕнђи турђка сасси.

Хветĕр ура çине тăнă та, кам çавăн пек аташса çўренине шырама тытăннă.

Никам та курăнман пўртре.

Хветĕр хăраса кайнине пĕрене шăтăкĕнђен таракансем пăхса тăнă.

— Фу ты!—ienĕ Хветĕр.

Тĕпелте ларакан сĕтел вырăнтан тапранса Хветĕр патне тăват урисемпе утса пырса тăпăрт-тăпăрт туса илнĕ.

— А-ă ă! Шуйттан кĕвенти!—тенĕ çын сассипе йăвăçран тунă сĕтел.—Шуйттан та мар ес, етем те мар...

Сĕтел хăйĕн арђине (сунтăхне) уçнă та, лађ сурнă Хветĕрĕн ырхан пиђĕ çине...

Хăлтăр-хăлтăр, утса пынă Хветĕр патне ухват:

— Пĕлетни ес, тенĕ вăл Хветĕре пĕр йĕппипе йунаса.—Пĕлетни есĕ, шуйттан, епĕ тутлă шăршăллă аш йашки куршакне (ђўлмекне) тытса пăхманни миçе уйăх çитнине, тенĕ те, куршака йăтнă пек, Хветĕре икĕ тимĕррипе майĕнђен йарса илсе çаклатса туртма тытăннă.

— Ман çийе хăйар шўрпипе паранкăсăр пуçне нимĕн те лартмастăн,—тесе хайаррăн кăшкăрнă ђарăнма пĕлмен сĕтел. Мункунтанпа аш йашки курман. Кайатăп кунтан. Колхоса куçатăп.

Тăвар суланђи сулланса вăрçнă:

— Ман ăшри тăварпа тип çăкăрпа сухан тваврашĕсем анђах пуçса çиетĕн. Тăварне те кăвакарнине анђах илетĕн А ă, хыт кукар!..

Ђăштăр! сапса йанă хăйĕн тăварне (Хветĕр йенелле) тăвар суланђи.

Хветĕр аран айаккала пăраннă. Пăрăнман пулсан тўмен тăвар муклашкисем куçĕнђенех тивмелле.

— Ак парам сана хампа!—тесе пынă турђака.

— Çатлаттарса йарсан ак çамкунтан!—Çат-çат-çат! туса тăнă Хветĕр çамки умĕнђе кашăксем.

— Пĕр ерне уш вĕри йашка курман.

— Ђăнкăр!—сиксе пырса ларнă тата Хветĕр умне хура хуран.—Мĕн пăхса тăратăр! Тавай ăна ĕнселесе йарар лайăхрах „Пĕрлешўре вăй“ теççĕ етемсем. Пурте пĕрлешĕпĕр те таккойски парса йар р.

Пурте кĕпĕрленсе пыраççĕ Хветĕр çине. Шăри-шари, шăй-шăй! Ђăнк-ђанк!.. Шăлтăр шарт!.. Тўнт!.. Хăнтăр-хонт!.. Халт!.. Ши!..

— Колхоса кĕмесĕр пире выçă вĕлерет. Шăнкшанк!..

— Ай-уй! Хурах! кăшкăрса йанă Хветĕр.

Пăлтăр-палтăр ўке-ўке аран тухса тарнă вара вăл пўртрен

— Хăвалăр ăна, хăвалăр!—тенĕ сассем пўртрех тăрса йулнă вара.

Кусем çине шалăпă пама Хветĕр йалсовета ђупат.

— А-а! Есиха!—тенĕ сасă илтĕннĕ Хветĕр йалсовет хапхи умне пырса тăрсан.

Хайхи кашăк-тирĕксем, тăвар суланђисем кăшкăраççĕ пулђа, тесе кайалла çаврăнса пăхнă мĕн те Хветĕр, пĕр йапала та курăнман.

— Мĕнле хăйамат ку?

— Сисетни ес темиçе кун ĕнтĕ епĕр пăкăрпакăр! туса çўретпĕр?

— Ман пыршăсем калаçаççĕ—туйса илнĕ Хветĕр.

— Пыршă йулташсем, тенĕ çемçен Хветĕр.—Мĕн çитмерĕха сире. Манăн йалсовета каймалла, сирĕнпе калаçса тăма вăхăт çук.

— А а! Пăкăр-пакăр!.. Есĕ пирĕнпе калаçасшăн мари! Ах, ты, пăкăр-пакăр пўрократ! Ĕçлĕ вырăна кĕмесĕрех пўрократлатса карăни? „Капкăна“ çаклатмалла сана.

— Ђухăн епĕ, тенĕ айаплă сасăпа Хветĕр.—Тыррăм пĕтсе çитрĕ. Пурђĕ те, йулашкине кулак парăмшăн илсе карĕ. Каçарăр ĕнтĕ мана. Кăшкăрма пăрахăр. Кулак илсе кайман пулсан...

— А-а, сан кулакшăн пур, пирĕншĕн çук, тенĕ мăн сасăпа хырĕмĕ.—Кулакран уйрăлса колхоса кĕреймен пиркийех пире асап кăтартатăн. Пăкăртаттарăр хытăрах! Кăшкăрăр. Хурах!.. Кравул!.. Выçă вĕлереççĕ!. Çăлăрах!

— Хурах!..

— Хурах!..

— Ах, тур хупламанскерсем! Ђарăнăр, мурсем! Ак пĕрре хырăмран панклаттарса йарсан.

— Ђарăнмастпăр!—хайаррăн кăшкăрса йанă вĕтĕ пыршăсем.—Çитĕ кун ђухлĕ тўснипе. Револђутси пулни 13 мĕш çул—вăл халиђђен те колхоса кĕресси çинђен аса илмест. Кравул!..

Пыршăсем пĕрин çине пĕри хăпарса тăрса тата хытăрах хурахлатма тытăннă.

— Уйăрăлса кайап ак, тенĕ пуç (конешнă Хветĕр пуçĕ!..)Тăм пуç теме пуçлĕç мана çынсем кăçал çураки умĕн те есĕ колхоса кĕмесен. Сана пула тăм пуç йатне илтес пулат. Ак, уйăрăлса кайсан, пурăн вара пуçсăр. Мĕн ларт̆анха вара ман вырăна майу çине. Кăшкар лартса йарсан, çынсем кулса вилĕç.

Ухмаха йертĕм пуђ тесе, Хветĕр пуђнитсана ђупнă. Йероплан пек ђупнă хăвăртрах пуђнитсана çитес тесе.

Йур айĕнђен пĕр уйăх ĕлĕкрех тухнă калђасем хĕвел çинелле саванса пăхнă. Çўле, пĕлĕт патнех вĕçсе хăпарнă тăррисем иккĕн харăс, тăрри тăрри.. çеçеттин, çеçеттин!—тесе, илемлĕ çинçе

сассисемпе Петӗр Иӑванӗн (Хветӗр кӳршин) контрактатси йӗркипе акнӑ ани ҫинђи йешӗл ӳсселарнӑ калђана мухтаса йурланӑ.

Хветӗр хӑй ани тӗлне ҫитнӗ. Калђисем ҫинҫе сассисемпе йара панӑ йурра:

„Ҫӳлте кайӑк вӗҫнӗ ђух
Кам урине курни пур.
Ҫум куракпа ӳснӗ ђух
Кам калђине курни пур...“

Паҫӑр Петӗр Иӑванӗ ани тӗлӗнђе „тӑрри-тӑррь!“ тесе йурлакан кайӑксем: трийер, трийер!—тесе вӗҫсе тӑнӑ тӳпере.

Хветӗр хӑйӗн ани ҫинђе ӳсекен калђасенђен сиккипе ђупса иртсе кайат̆. Ытти ҫынсен анисем ҫинђи калђасем ҫавна кура: хи хи-хик! тесе кулса йулаҫҫӗ. Ҫапла „хи-хик“ тесех кулнӑ.

Хура пусса тухсан, Хветӗре хирӗҫ, хӑйсен йалӗ кӗтӗвӗ пынӑ. Хветӗре курсан пилӗк сурӑх, пӗр сысна, татӑ пӗр ӗне урса кайнӑ выђӑх пек, ђупма тытӑннӑ Хветӗр патнелле.

— Му ук!.. Ме-ек. Нӑрик-нӑрик! Контрактатси... Ӑшӑ вите. Лайӑх ӑратлӑ така... вӑкӑр... тенӗ сасӑсем сывлӑша ҫураҫҫӗ Хветӗр ӑна курсан (ку ырра маррине сиснӗ ӗнтӗ) ҫӗтӗк ҫаннипе хура тарне шӑлса илнӗ те, тавай мӗн вӑй пур таран кайалла тарма. Ђупнӑ-ђупнӑ Стоп... Хветӗрӗн ҫӳҫ-пуҫсем каллех хӑмӑш пек вирелле тӑрса кайаҫҫӗ. Ҫулпа, ӑна хирӗҫ сухапуҫсем, тырӑ акмалли кунтӑсем, йӑвӑҫ сӳресем кӗмсӗртеттерсе пыраҫҫӗ.

Хветӗр ни кайалла, ни малалла.

Выђӑхсем Хветӗре ҫавӑрса илеҫҫӗ. Лаши кагаран пит хайарран кӗҫенсе пырат̆:

— Мана кантарас теместӗн. Ҫынсем, колхоса куҫнисем трактӑрсемпе суха тӑваҫҫӗ, нӑй-нӑй!.. Ме-ек! Нӑрӑх!..

Ӗни мӑйракипе ӑсса илнӗ Хветӗре, сурӑхӗсем мӑй ҫине хӑпарса ларнӑ. Лаши нӑй! туса,—шарт! тапса йанӑ. Пӗтрӗ Хветӗр!

— Хурах! Хурах!..

Хурах кӑшкӑрма сасси тухмаст̆.

— Хура-а...

— х-х-х!—тесе вӑранса сиксе тӑнӑ Хӗветӗр.

Шапӑртатсах хура тар йухнӑ Хветӗр ҫамки ҫинђен сытар ҫине.

* *
*

Халӗ Хветӗр колхос ђленӗнђе тӑрат̆. Хӑйӗн колхосри йулташӗсемпе ҫуракине хатӗрленет. Вӑл колхоса епӗ те пырса куртӑм. Лайӑх хӑналаса йађӗҫ. Хветӗр мана ӑсатса йађӗ. Ӑсатса йанӑ ђухне хӑй тӗлекӗ ҫинђен шурналра ҫырса пӗлгерме хушрӗ. Епӗ ҫыртӑм. Есӗр вуларӑр. Ыттисене те вуласа кӑтартӑр.

ЙӐВАН-МУЂИ.

Ђулсем.

Тутаркас р. Хурнай коопеатгивне Ђӑвашсойусран сахӑр тийесе килнӗ те, ђипӗр мӑйӑлӗнђен ђул муклашкисем тухнӑ.

Пускилсем: Иеххӗм муђи, мӗншӗн ара есӗр, ђейне сахӑрпа ӗҫес вырӑнне, ђул катӑкӗпе ӗҫеттӗр, йе сахӑр ҫуки?

Йеххӗм муђи: Пире лапкаран ҫапла парса йађӗҫ. Епӗр ҫӗнӗ йышши сахӑр пуђ тесе ӗҫетпӗр.

Ухти.

Ҫуракине хатӗрленнӗ вӑхӑтра.

— Ей, Петӗр Хветӑрђӑ, тӑрха, вӑран ӗнтӗ. Ҫынсем ҫураки валђи вӑрлӑх тасатма тытӑнђӗҫ.

Кӑмака ҫинђе выртакан Петӗр Хветӑрђӑ вӑранмаст̆, харлаттарсах сывӑрат̆.

— Ей, Пӑгӗр Хвегӑрђӑ, тетӗп! Машшин йулташлӑхне пурте сырӑнаҫҫӗ.

— Выђӑх-ђӗрлӗх хисепне нумайлатмалла.

— Хр-р-р!.. Х-х-х!

— Контрактатси туса хуҫалӑх тоххотне ӳстермелле!

Петӗр Хветӑрђӑ каллех харлаттарат̆:—Х-хр!. Хӑрр-ш!

— Колхоса сырӑнаҫҫӗ ҫынсем. Есӗ ҫырӑнатӑни?

— Хррр!. Харр! Х х-х!..

— Петӗр Хветӑрђӑ, ҫынсем курӑк акасси ҫинђен сӳтсе-йаврӗҫ.

— Ахӑ-ӑ! Хрр! Х-х-х!..

— Петӗр Хветӑрђӑ, нумай пуҫуллӑ уйа куҫас пирки ал тӑратмаллађђӗ...

— Уху! Хр-р!.. Х-х-х!..

Вӑратаканни Петӗр Хветӑрђа ик хулпуҫҫинђен тытса силлет:

— Тӑр ӗнтӗ! Мӗн ҫапах сывӑратӑн?

Петӗр Хветӑрђӑ вӑранат̆.

— Сывӑрма та ирӗк памаҫҫӗ... Кам сасси илтӗнђӗ кунта? Мӗн кирлӗ?

— Тырпул тухӑҫлӑхне хӑпартмалла. Ҫураки ҫинђен..

— А! Епӗ урӑххи ҫинђен тесе.

Петӗр Хветӑрђӑ каллех выртат̆ те, ҫийӗнђех сывӑрса кайат̆.

— Хр р-р! Х-х-х!—

тени темиҫе ҫухрӑма илтӗнет.

Ђӑвашсойус складӗсенђе купи-купипе пӑђкӑ-пу тӑсем хай хураса кӗтсе выртнӑ. Вӑрман хатӗрленӗ ҫӗрте пӑђкӑ ҫукки пе аптраҫҫӗ.

— Ђӑвашсойус шухӑшӗпе вӑрмана ҫапла касмалла.

ТЕЛЕЙ

Хресђенсем ђылайӗшӗ ушкӑнлӑ хуҫалӑха кӗрсен тин ун уссине пӗтӗмпех пӗлсе ҫитеҫҫӗ, тӗшмӗшсене те ӗненме пӑрахаҫҫӗ. (ХАҪАТРАН).

Хӑт те хӑҫан каласма тытӑнсан та, хӑт те мӗнле сӑмах хушсан та ҫавнах перет Ахтер пиђђе. „Телей ҫук манӑн. мур илешшӗ, ӗне ҫинӗ пулас ман телейе“, тет ӗнсене хыҫкаласа. Сухалӗпе ҫӳҫӗсем кӑвакарнӑ унӑн, пиђӗ-куҫӗ кивӗ кӗрӗк пек пӗркеленнӗ.

Пӗрмай ҫавӑн ҫинђен калаҫнипе, епӗ аптранӑ йенне, ӑна тӗпӗ-йӗрӗпе каласа пама хушрӑм.

— Каласа парха, Ахтер пиђђе, мӗнле есӗ йалан хӑна телейсӗр тесе ӳпкелешетӗн ҫак,—ӑҫтан телейсӗр есӗ—ыйтрӑм епӗ унтан, пӗрре ман пата калаҫма пырса ларсан.

Пушӑ вӑхӑтра пыркалат̆ вара вӑл ман пата. Пырат̆ те калаҫа-а-а-т̆ вара мӗн курнипе мӗн илтнине Ӑҫта мӗнле ҫветтуйсем пулнӑ, хӑш ђиркӳре йепле йурлаҫҫӗ... Тупат̆ вӑл кирлӗ мара калаҫма. Иулашкинђен вара хӑй телейсӗрри ҫинђен калаҫма тапратат̆. Хаљхинђе пырсан тӳрех ҫавӑн ҫинђен хускатрӗ.

— Ӑҫтан телей пулат̆-и? Телей мур пек тарат̆ манран,—тесе пуҫласа йађӗ вӑл ман ыйтӑва хирӗҫ.—Епӗ нумайранпа сӑнанӑ ӗнтӗ, йаланах тепӗр май тухат̆—хушса хуђӗ вӑл. Епӗ кӗнекене сӗтел ҫине хурсах итлесе ларатӑп.

— Хӗлле есӗ ӑҫта та пулин кайма тытӑн, йур пӑхми курми ҫума тытӑнат̆. Пӗрре (пӗр суйеҫтермесӗр калатӑп, терӗ вӑл аллине хӗрес хума ҫӗклесе, анђах иккун суккине сиссе аллине ҫӑварӗнђен ҫӳлелле ҫӗклеймерӗ).

— Хӑш ђух хапхаран тухатӑн кӑна, пӗр икӗ утӑм кайсан, сана хирӗҫ пушӑ витресем йатса тухаҫҫӗ. Пушӑ витре тӗл пултӑн, ан кай та вара кайас ҫӗре, калла ҫаврӑн, ӗҫ пурпӗрех пушӑ пулат̆. Йе ҫурма ҫула ҫитсен мулкаћ ҫула пӳлсе кайат̆, мур хирнӗ йапала. Йе маларах, йе кайарах тухасђӗ, вӑл шуйттан ҫӑпати, сыхласа кӑна тӑрат̆ сана. Лӗнкӗр, лӗнкӗрт! сиккелесе хӑлхисене тӑраткаласа каҫҫа кайат̆ вара. Мӗн тӑвӑн ӑна? Ђупса ҫитсе ҫапса ӳкерейменӗ вӗт. Пӗрре ҫапла, те суккӑрланнӑ сӑнсӑр, лаша ури айӗнђенех каҫса кайрӗ. Ђӑтаймарӑм — хӑвалама пикентӗм. Ҫитӗн ӑна мура! Вӗҫтерет анђах. Ђупрӑм, ђупрӑм... пӑрахрӑм. Ӑна пула лашасӑр тӑрса йулаттӑм. Хам мулкађпа аппаланӑ вӑхӑтра лаша пӗрмай малалла утнӑ. Пӗтнӗ халӑмпа арран ђупса ҫитсе лартӑм. Мӗн калӑн ӗнтӗ? Ытти-хытти тарам, нумай пулмаст̆ пит кулӑшла пулђӗ.

— Пӗрре епӗ хулана, кил-ҫуртри кирлӗ йапаласем илес тесе (ҫен кусатӑран унта, кӗреҫем тата ытти йапаласем) сӗлӗ сутма кайсаттӑм. Вӑл ҫул сӗлӗ, суйеҫтереймӗп, пит аван пулнӑђђӗ.

Сӗлӗ сутрӑм. Йенђеке пилӗк хут йаваласа ҫыхрӑм. Кӑларса илеҫ тесе—хӑраса майран ҫакрӑм. Пӑхӑрпа кӗмӗлне хутпа ђӗркесе кӗсйене ђикрӗм. Унта тенкӗ те тӑхӑр вунӑ пусђӗ. Йурат̆. Лашана хваттере леҫсе хӑвартӑм та, хам йапаласем илме... Пыратӑп пасаралла васкаса. Кусатӑран илме васкатӑп.

Пыратӑп кусатӑран сутакан ерттеле.

— Кам пуйас, тет, кунта килӗр! Кам укҫине нумайлатас тет, пухӑнӑр, пӗтӗм вӑйӗпе ахӑрат̆ пӗри. Ҫавранса пӑхатӑп, ҫынсем пухӑннӑ. Кусатӑран илме ӗлкӗрӗпха—шухӑшлатӑп. Пырса пӑхамха, мӗскер йапала иккен вӑл тетӗп. Пырса тӑтӑм. Йӗри-тавра пӗр 10-15 ҫын тӑраҫҫӗ. Вӗсен варринђе пӗр сарӑ майӑхлӑ ҫын темӗскерле ҫавракa сӗтел умӗнђе тӑрат̆. Тӗлӗнсе пӑхатӑп. Нихҫан курман йапала.

— Мӗн йапала?—ыйтатӑп тӑракансенђеп.

— Выђаса пуймалли, теҫҫӗ кулкаласа.

— Йепле майпа пуймалла унта? тӗпђетӗп вӗсенђен. Ырӑ ҫынсем тӗл пулђӗҫ, пурне те каласа параҫҫӗ.

— Пӑхса тӑрха акӑ, курӑн мӗнле пуйнине, теҫҫӗ вӗсем. Йурат̆. Тӑратӑп пӑхкаласа. Пӗри „ђер р-р“ тутарат̆ те пӗр ывӑҫ укҫа илсе ђикет кӑсйине, „ђӗр-ӗ-ӗр“ тутарат̆ те тепӗр ывӑҫ укҫа илсе ђикет. Вӑт—шухӑшлатӑп—йепле пуймалла иккен ӑна. Ман ђӑтма ҫук пуйас килсе карӗ. Тӑратӑп, пӑхса. Леш хирђӗ укҫана та кайрӗ пӑранса.

— Мана „ђӗрӗлтеттерме“ йурат̆-и, ман укҫа пур, хаљ копператтива 18 пӑт тырӑ сутрӑм—тетӗп малалла сӗкӗнсе.

— Йурат̆, тет, йурамасӑр. Пуриншӗн те тунӑ ӑна—тет. Айта ҫавӑрамха еппин—тетӗп. Ултав тавраш ҫук пулӗҫке?—ыйтатӑп малтан вӗсенђен, пӗлмен пек пулса.

— Ху куҫ умӗнђе, ӑҫтан ултав пулмалли пур унта,—тет пӗри. Йарамха, епин. Тур ҫырлах,—терӗм те ҫавӑрӑнаканнин тыткине алла тытрӑм.

— Пар кушилне хам тытса тӑрам!—тет пӗри йавашшӑн кӑна пӑхса. Кушил ђӑнахах кансӗрле", мур. Патӑм хайхине те ҫавӑрса йатӑм.

— Апла пустуйа ҫавӑрма йурамаст̆, малтан миҫе тенке кайассине калас пулат̆,—тет сарӑ майӑх (ҫавракa сӗтел хуҫи). Хӑратӑп малтан нумайа кайма.

— Алӑ пуса,—терӗм те ҫавӑрса йатӑм. Шӑп кӑна тӳрӗ килђӗ.. алӑ пус ҫакланђӗ. Савӑнса кайрӑм хайхи. Ҫул ҫинђе мулкаћ тавраш каймарӗ,—шухӑшлатӑп ӑшӑмра.—Пайан телейлӗ кун, телей сӑнамалли кун.

— Пӗр тенке кайатӑп?—тетӗп ҫавӑрмаллине тытса.

— Пастай, ђим-ха, мушӗт сана укҫу та пӗр пус та ҫук тӑр, тет мана майӑх.

— Йепле ҫук пулат̆ вӑл,—тетӗп—акӑ хаљ кӑна тырӑ сутрӑм. Сӗлӗ кӑшт ытлашки пурђӗ. Сутрӑм хаљ анђах—кӑтартап ӑна йенђеке хӗврен илсе.

— Ну, йурӗ, шанатӑп, шанатӑп—терӗ хайхи.

— Ҫавӑрса йатӑм тепӗр хут—килсе ђарӑнђӗ анђах сар майӑха пулђӗ. Ман алӑ пус кайрӗ. Ҫав вӑхӑтра епӗ кайма та шутланӑђђӗ, алӑ пус шел пулса кайрӗ. Мӗн пулмаст̆, терӗм, йатӑм тепӗре. Куннинђе тенкӗ ҫурӑ мана ҫакланђӗ. Хӗрсе кайрӑм хайхи. „Вӑт телейлӗ ҫын“, теҫҫӗ хыҫалта тӑракансем.

— Виҫ тенке йаратӑп, виҫ тенке!—кӑшкӑратӑп хайхи савӑнса.

— Халӗ те сана ҫаклансан, урӑх сана выђаттармастӑп, тет хуҫи.

— Йепле выђаттармастӑн пулатӑха вӑл?—тетӗп кӑна савӑннипе.—Выђама тытӑннӑ-тӑк епӗ пӑраххиђен мана ђарма пултараймастӑн есӗ, тетӗп,

— Ну йурĕ, йурĕ ан кăшкăраш, ҫыхланмалла марђĕ иккен санпала, мурпала, тет.

Ҫавăрса йатăм, ăна ҫакланђĕ, кăшт кусса ҫитеймерĕ. Шел укҫана кăларма, кăлармалла пулђĕ. „Укҫана кăлармасан выђаттармастăп“ тет. Тенкĕ ҫурă ĕҫерĕнђĕ хайхи. Ҫиллĕм килсе кайрĕ: тавай виллĕк тенке!—тетĕп ҫаврашкине тытса.

— Хур укҫăна малтан, тет.

— Хуратăп, ан хăра, тетĕп те, 5 тенкĕ кăларса хуратăп.

Аллăм ђĕтрет. Те алă ђĕтренипе... лекмерĕ мур. Кăшт ҫеҫ иртсе кайрĕ. 6 тенкĕ ҫурă кайрĕ хайхи. Калла кайма ерлĕк. Ултă тенкĕ ђылай йапала илме йурать. Укҫана шыва пăрахас килмест. Хам укҫана тавăрма шутлатăп. Ҫавăрса йатăм, куҫ-пуҫ алђăрса кайрĕ. Каллех лекмерĕ. Тĕлне кăшт ҫеҫ ҫитеймерĕ. 6 тенкĕ ҫурă кăларса хутăм. Ерленсе ҫитрĕм. Куҫҫулĕ тухма пуҫларĕ. Тарласа кайрăм ыраш ҫапнă ђухнехи пек. Тар йуха пуҫларĕ, ҫĕлĕке ĕнсе хыҫне ҫĕклесе лартрăм. 13 тенкĕ тухрĕ вĕт кăсйерен Ие пуҫ, йе мул тетĕп пурĕпĕрех пĕтрĕм. Иаратăп тата 10 тенке, хуть вуннăшне тавăрам, шухăшлатăп. Ҫавăраканнине хĕрес хутăм.

— Айла йурамасть вăл—тет сарă мăйăх кутăна персе.

— Иепле йурамасть, ман хам укҫа, епĕ хуть те мĕн тăвам, тетĕп ăна хирĕҫ. Хăрарĕ хайхи Н-у-у—шухăшлатăп, манăн пулать. Епĕ кĕртессе сиссе кутăнланать вăл. Иатăм пĕтĕм вăйпа ҫавăрса. Вăйлă йатăм пулас, ҫаврăнса ђарăнаймасть.

— Иерипентерех есĕ хăтлан,—тет мана сăнсар мăйăх,—хуҫса пăрахăн.

— Хуҫăлин хуҫăлĕ, тетĕп ăна хирĕҫ, хам куҫа илмесĕр ăҫта ђарăнассине пăхатăп. Пырса тăрăнђĕ. Шăп кăна пырса тăрăнђĕ пăта тĕлне.

— Кӳр, манăн, кăшкăратăп.

— Ҫу-у-ук, куҫна авантарах ђарса пăх есĕ. Пит аллăна ан тăс,—тет. Пăх йĕп вĕҫĕ кĕрет,—йĕп вĕҫĕ кĕмесен анђах санăн пулмалла вăл,—тет укҫисене пĕтĕмпе хăй кăсйине ђиксе.

— Ма кутăнланатăн, пар укҫана! кăшкăратăп епĕ.

— Ҫынсене кăтарт, вĕсенђен ыйт ав, тет куҫне хĕскелесе.

— Иулташсем, терĕм епĕ!—мана пулмаллаҫке! Каласа та пĕтерейменĕм, пăхатăп—кушил тытса тăракан ҫын курăнмасть. Кушилте пĕр мăшăр ђăлха пурђĕ. „Караул“ кăшкăратăп. Куҫҫулпе йĕрсе йатăм. Кулаҫҫĕ манран, ман кулас килмест.

— Пуйрăни?—тăрăхлаҫҫĕ манран.

Мĕн тăвас тетĕн. Кайрăм вара куҫа шăлкаласа. Ну, мĕн калăп маткана? Пĕтерет ĕнтĕ вăл мана.

— Мĕн турăн вара, тесе ыйтрăм епĕ Ахтертен—вăл ҫак йапалана каласа пĕтерсен.

Ахтер ман лаа-а-аш хуйхăрђĕ те пилĕкне тӳрлетрĕ.

— Ан асăн та ĕнтĕ, терĕ вăл, аллине сулса,—хуйхăпа йулашки укҫана ерех ĕҫсе йатăм.

— Вăт телей сана, терĕ вăл, ман пит ҫине вĕри сывлăшне йарса. Вăт телей сана!... Таврăнсан маткана укҫана ҫухатрăм, тесе суйеҫтертĕм те, анђах шанмасть матка. Лекрĕ мана вăл ку,—аванах лекрĕ.

— Мулкађ каҫса кайманҫке сан ҫул ҫинђен—тесе ыйтрăм епĕ унтан, вăл ҫавăн пек йапаласене сăнаса пураннăран.—Мулкађ тавраш курманҫке есĕ ҫул ҫинђе?

— Вăл ман куҫран тăн н-н пăхрĕ те, нумайђен нимĕн те каламарĕ. Унтан аллине вăрăмăн тăстарса каласа хуђĕ:

— Тен, мулкађ епĕ ҫывăрнă ђух ҫул пӳлсе каҫса кайнă? Епĕ ҫывăрнă ђух кайнă вăл, ҫĕр тĕпне анман йапала—терĕ Ахтер пиђђе. Пĕрре тата куҫ ӳксе ĕне вилсе кайрĕ, е-е-ей, пурне те каласа пĕтерес ҫук—терĕ вăл пуҫне усса.

* * *

Нумай пулмасть епĕ ăна урамра хирĕҫ пултăм.

— Ну, телейне тупрăна?—шӳт туса ыйтрăм унтан.—Мĕнле сывлан?

— Тупрăм телейе, тин тупрăм—терĕ вăл йăл кулса мана хирĕҫ.

— Ну? Ҫапах та тупрăн иккен. Ăҫта выртнă иккен сан телейӳ. Каласа парха?

— Мушнĕ,—терĕ вăл ђĕлĕмне тивертсе.—Мĕншĕн калас мар. Ушкăнлă хуҫалăх турăмăр, Илтетни? Хађ ĕнтĕ тĕшмĕшленме пăрахрăм. Пурте ҫителĕклĕ. Тырă аван пулать, тăрăшса ĕҫлетпĕр. Ҫураки тума трахтăр парасшăн пире. Нумай пусса кӳрăмăр Хамăра та пур, патшалăха та ҫитмелле. Вăт ăҫта иккен вăл телей, пĕрлешсе ĕҫленинђе.—терĕ вăл тĕтĕмне пĕр хĕрнелле вĕрсе. Аллă икĕ ҫул телей шырарăм, аллă виҫҫĕмĕш ҫул тупрăм. Тоттă—терĕ вăл йулашкинђен кулкаласа.

Ҫ. Йалавин.

Кăҫал кураҫҫĕ ĕнтĕ.

Утик-касси йалне халиђђен акроном тавраш пырса курман. (ИАЛКОР).

— **Мĕн йалĕпех пухăнса тăратăр?**

— **Акроном килмелле, теҫҫĕ. Халиђђен курман йапалана курас тетпĕр. Трактăр манерлĕши вăл?**

ЙĔПЛĔ ÇĂМАХ ХЫПАЛАНСЕМ

Тĕлĕнмелле çынсем.

Пĕр Маркариттă Вепе йатлă хĕрарăмăн çӳллĕшĕ 16 çул çурăра ђухнех 255 сантиметр пулнă (10 пăт туртнă). Тепĕр Кайанус йатлă Финђанти çынни 283 сантиметр ӳссе кайнă. Колантире пĕр Паулин йатлă улпуг хĕрĕ 54 сантиметртан ытла ӳсеймен (4 кило туртнă). Çак йапаласенђен пит те тĕлĕнмелле ĕнтĕ. Анђах унтан та хытă тĕлĕнмелле Мускарин-кассинђи (Шуп. р.) кулак Никколай Милӳтинран. Вăл пысăк йал кулакĕ, икĕ çул çуралăх тĕрмĕне хупнăскер, тĕрме умĕнђе (тĕрме лапкинђе) прикашђĕкра ларат. Лавкаран йалти тăван кулаксене супăђ таврашсем, тапаксем, тата ытти вактĕвек йапаласем ăсатса тăрат. Йалти тăван кулаксем: пирĕн Милђуттин таврашĕсем тĕрмере те ырă курса пурăнаççĕ, тесе мухтанса çӳреççĕ.

Тĕлĕнмелле кунтан. Есĕр Маркариттăпа Кайанусран тĕлĕнмелле теттĕр. Вĕсенђен мĕн тĕлĕнмелли пур!

Усăлман çăвар.

Ианварĕн 10-мĕшĕнђе Шупашкар районĕнђи Ишлĕ-Покровскинђен çакăн пек хыпар илтĕмĕр:

„Ишлĕ-Покровскинђи партти йађейкки ĕçхресђенĕсем хушшинђе, ђухăнсен пуххисенђе çуракине хатĕрленесси çинђен сӳтсе йавман. Çийĕнђен тата хăйĕн ларăвĕсенђе, пуххисенђе çураки камппани çинђен çăвар та уçман“, тет.

Çăвар уçман?!. Мĕншĕн уçмастăши? Унти партти йађейкки çекреттарĕ çăварĕнђен таса мар шăршă кĕрет пулмалла. Çавăнпа вăл çăварне уçма вăтанат. Унăн çăварне формалинпа тасатса йарас. Формалинпа тасалмасан, тасату шăпăрĕпе лайăхрах сĕрсе тасатса пăхас.

Васкама шухăшламаççĕ.

Сахал мар, 20800 ђентнĕр çуртри вăрлăх кăçал тасатмалла Тутаркас районĕнђе. Тасатмалла та, анђах...

Мăнсĕнтĕрти проккат пункĕ йапăх ĕçлет. Йалсенђе вăрлăх тасатасси çинђен ăнлантарса паракансем çук. Ав, Пăсăрман йалĕ тырă тасатмалли машшина йала та кĕртмен, „кирлĕ мар пире“ тенĕ. Хăшпĕр йалсенђе 2-3 кил анђах вăрлăхсене тасаттарнă.

Тутаркас райĕçтăвкомĕнђе ĕçлекенсем вăрлăх тасатасси çинђен халĕ питех шухăшламаççĕ Шупашкартан выкăвăр парсан та шухăшламаллăх вăхат пулмаллаха, теççĕ.

Сысна — вылђăх.

Майкăђ тусан та сысна картана кĕрсе кайатех.

Кăшар-кассинђи (Çĕрпӳ районĕ) Кĕрпе Ваççийĕ, ĕлĕк 4-5 тарçăпа пурăннăскер, халĕ те çĕр тара илсе акаканскер, ђылай пуç вылђăх усраканскер, çăмартапа услам тăваканскер, тырăпа сутă тăваканскер — йалсовет ђленĕнђе тăрат.

Кăçал пĕтĕм Ђăваш респуплĕпе сысна-вылђăх шутне 42 прођăн çурă ытларах ӳстермелле. Вăл шута Кăшар-кассинђи Кĕрпе Ваççи йатлă ăратлă сысна кĕмест. Ун йышши сыснасене усрамалла мар. Кăçалах пĕтерсе хумалла.

Кĕтмен çĕртенех.

Кĕтмен çĕртенех пысăк ĕçсем пулса пыраççĕ: иртнĕ теккапĕрĕн 25-мĕшпе 26-мĕш ђислисенђе Пакку таврашĕнђе. кĕтмен çĕртенех, çĕр ђĕтренни сисĕннĕ; Çĕрпӳ районĕ, кĕтмен çĕртенех, интустри саймĕ тĕлĕшпе, ђи кайри хӳрене тăрса йулнă.

Çавăн пек тата Пĕрремĕш Алин йалĕçĕçтăвком (Шуп. р.) претçетаттĕлĕ Иаркейĕв Петĕрĕ самооплошенипе çемсутă укçине, кĕтмен çĕртенех, 100 тенкĕ хăй кăсйине ђиксе хунă. Иурат ревиçи комиççи çав ирçĕрлĕхе тупнă. Халĕ ĕнтĕ самооплошени укçи çăлсем, хапхасем йусас вырăнне Иаркейĕв кăсйине „йусама“ кайнă.

Иаркейĕв кăсйи йусаннă, алли йусанман-ха — кукăр алăпах çӳрет. Кукăр аллине йусама тĕрмери маçтерскойне йамалла.

Сивĕ вырăнсем.

Çурçĕр йенђи Аçире, Ианă йатлă шыв çинђе сивĕ 70 кратăса çитет. Иевроппăра та сивĕ вырăнсем пур,—сăмахран çурçĕр йенђи вырăнсенђе, тата Куславккари колхос ĕçне вĕренмелли шкулта сивĕ. Урок вăхăтĕнђе унта ађасем шăнса кăвакарсах кайаççĕ. Опшђешиттинђе, темиçе хут тумтир витĕнсе выртсассăн та, вĕренекен ађасен шăлĕсем шатăртаттараççĕ. „Ађасем хĕл каçиђен вилме те хатĕрленеççĕ“, тет пĕр „Витĕр куç“.

Вилме ан хатĕрленĕр, ађасем! Куславкка районĕнђе кăçал 1165 хресђен хуçалăхне колхоса куçармалла. Çав ĕçе тунă çĕрте есĕр кирлĕ пулатăр. Сире шăнтакансем... те кирлĕ пулаççĕ—ун çинђен тĕрĕссипе кăтартса пама пултараймастпăр.

Çитмĕш йалĕ.

Çитмĕш йалне пĕлетĕри есĕр? Ой, пĕлместĕр есĕр Вăрмар районĕнђи Çитмĕш йалне! Çитмĕш йалĕнђе çитменлĕхсем пит нумай. Çитмĕшре комсомолĕсем халĕ те хут пĕлменнисене хут вĕрентме тытăнман. Ма тытăнмаççĕ? „Йĕплĕ çăмах“ çийеçшĕн. Тутлă йапала, теççĕ пулмалла ăна. Тутлă, тутлă, çийĕр, йулашкине Ђĕкĕту йалĕнђи 13 хут пĕлмен çынна хут вĕрентме пулнă уђитлĕсене парăр. Вĕсем те сирĕн пек ĕçе тытăнман.

ТӲРЛЕТНИ.

«Капкăн» 24-мĕш номĕрĕнђе икĕ сурăх калаçса тăнă карттин пур. Çав карттин айĕнђе «Карађурă ферминђе» тесе çырнине «Сассурски совхосра» тесе вуламалла. Йăнăш çапăннă.

Кашкăр.

Кашкăра тем ђул тăрантарсан та вăрманаллах пăхаť, тенĕ авалхи етемсем.

Вăрмар районĕнђи Кавалта „Смыђкă“ копператтивăн пуҫлăхĕ, питĕ пысăк кулак ывăлĕ пулнăскер, Матви Ҫтаппан Петĕрĕ пĕр пуйан, сасăсăр хăварнă кулака 50 пăт тимĕр сутнă, хресђенсене тем ђул тархасласан та, «ҫук» тесе ăсатнă Ытти таварсене те (потошвăсене, шпуљккă ҫипписене) тĕрлĕ ђаҫтнĕксене ăсатни палăраť. Таварсене ђаҫтнĕксене ăсатаť, хăйне ăҫта ăсатмаллаши, тет Тĕпсĕр йулташ.

Ку ыйтува хирĕҫ ҫапла калама пултаратпăр: Совет Сойусĕнђе ун пек кулаксем майлă ĕҫлекенсене вырăн ҫук, ытти патшалăхсенђе – ҫитес ҫулсенђе Совет пулмалла та, унта та Ҫта пан Петĕрĕ ваљђи вырăн пулмасť. Луђђă ăна Марс йатлă планет (ҫăлтăр) ҫине йарас. Унга ђĕрђунсем пурă наҫҫĕ, теҫҫĕ Ҫĕр ҫинђен Марс ҫи-е кайма 52 – 380 мĕлйун километр вĕҫмелле, теҫҫĕ те, анђах уншăн ҫул укҫи парас мар.

Ĕҫсĕр аптранă ђухнехи шухăшсем.

Пуҫлăх куҫне шăтарасла пăхма хушнă, пахђа-ҫимĕҫ вăрлăхне шăттарса пăхма хушнă.

—

Ҫĕр оркăнĕсем ђиркуљар акма пуҫласан, хресђенсен вăрлăх акас вăхăт ҫывхараť.

—

Пӳрократа тыр акма хушсан: ыран акап, ыран акап, тесе тепĕр хĕллеђђенех ĕҫе тăсса пыма хатĕр.

—

Йала ҫураки кампанине иртерме кайакансем, йалта ывăнађђенех ĕҫлĕр, канасса йалтан тавăрăнсан *уђрештенире сĕтел хушшинђе ларнă ђухне те (пуҫлăх курман ђухне) канса илĕр.

—

Вăрлăха машшинпа аксан кирлĕ мар ҫĕре сапаланса каймасť, шухăш, машшинпа акмалла туман пирки, таҫта инҫетри хăйăмата та кайса сапаланаť.

Зӳтпуҫҫисем

Ђас палăрмарĕ. Ђаканарта (Шупашкар р нĕ) иртнĕ ҫул уҫăлнă пушар трушинин ĕҫĕ кăҫал тин палăрма пуҫларĕ: хурал сарайĕнђи пакур аврисене урапа каштисене хурал пӳргне ăшăтма ҫунтарса пĕтерђĕҫ. Сарайĕ ĕлĕкхинђен йапăхса кайнă, трушинă ђленĕсем йапăхман—сухаллисем сухалĕсене каҫăртса ҫӳреҫҫĕ, сухал ҫуккисем—йанаххисене каҫăртса.

Мĕншĕн ҫтена хаҫађĕ тухма пăрахнă Ҫавал хĕрри Канашри (Ҫĕрпӳ районĕ) комсомол йађейккин хут ҫинђе халĕ те тухса тăракан ҫтена хаҫађĕ тухмă пăрахни 4 ҫул тулгараť (менелник пулаť). Мĕншĕн ҫтена хаҫађĕ тухма пăрахни ҫинђен йалти ăслă ҫынсем ҫапла каласа пĕлтереҫҫĕ: ретколлеки ђленĕсем ҫтена хаҫатне статйасем нумай ҫырнипе алăсăр пулса ларнă, йађейккăра тăракан комсомолĕссем ҫтена хаҫатне вуласа куҫсăр пулнă та ҫтена хаҫат ваљђи саметкăсем ҫырайман. Комсомолĕссене ҫтена хаҫађĕн менелникĕ ваљђи сăрасем тума хушмастпăр (Йалнав).

Хурăлнă кĕтес Кăшар-кассинђе хĕрлĕ кĕтес пурђĕ. Анђах ҫав кĕтес йулашки вăхăтра хуралђĕ: хаҫат кĕнеке вулас вырăнне, хресђенсем йумахсем ҫаптарса ђĕлĕм тĕтĕм мăкăрлантарса лараҫҫĕ. Хĕрлĕ кĕтесре ђĕлĕм тĕтĕм мăкăрланни хĕрлĕ кĕтесе йертсе пыракансен пуҫĕнђе „йапăх“ тĕтĕм мăкăрланнинђен килет.

Урапа тупайман пирки. Йаманакри ҫитĕннисен шкулĕнђе вĕрентекен Титтовă А., хăйĕн урапи ҫук пирки. кулаксен урапи ҫине улăхса ларнă Сасăсăр хăварнă ҫынсемпе ђиркӳ праҫникĕсенђе йурласа, ташласа, савăнса иртернĕ. Кулаксен урапи ишĕлсе ансан кам урапи ҫине ларасси паллă мар.

Аса илсе. Шупашкар пуљнитси пуҫлăхĕсем, „вăрманта лашине ҫапмаллăх хулă тупайман“ тенĕ паллă сăмахсене пурнăҫа кĕртес тесе, пуљнитса пыракансен йађĕсене ҫыраканнине ђăвашла пĕлекенсем хушшинђен тупайман—вырăсла калаҫаканнине тупса лартнă. Ђăваш хĕрарăмĕсем унпа калаҫма пĕлмеҫҫĕ, тухтăрсем—пĕлеҫҫĕ.

Ҫĕнĕрен виҫмелле Кĕҫĕнйелђĕкрен Курнавăша 15 ҫухрăм теҫҫĕ. Тĕрĕс мар мĕншĕн тесен Иелђĕк райсовеђĕ Курнавăшри ОТН йађђейкине йанă пĕр отношени 1 уйăх та 3 кун ҫуренĕ Ҫĕнĕрен виҫсе пăхма хушатпăр.



Вăрман ҫупотнĕкне кайакан ҫын мар ку—унтан таракани.

Иетӗрнене шӗвӗртнӗ-ӗ!

Ку истори ҫинђен каласа кӑтартма пуҫлађђен малтан—манӑн вулакансемпе пӗрик сӑмах калаҫса илес килет. Ӑшђиккӗме лӑплантармасӑр нийепле те ђӑтма ҫук.

Тоссатнӑ мана!..

Вырӑссен XIX-мӗш ӗмӗрти писсаттӗлӗ Н. В. Кокӑљ „Ревисор“ йатлӑ комети ҫырса тӗнђери клаҫҫӗксен тенкелӗ ҫине ларнӑ. Ҫурӑлса кайас пек тарӑхатӑп: Мӗншӗн ҫырнӑши ӑна вӑл!? Урӑх ҫырмалли нимӗн те тупайман-им? Кокӑљ ҫырман пулсан—епӗ ҫырнӑ пулӑттӑм вӑл „Ревисор“ кометине... Тупата! И пӗртте кайа пулмастђӗ манӑн ҫырӑвӑм Кокӑљӗнђен, тӳрех каламалла. Темӑ—Никколай Ваҫҫилђӑнђен те ђаплӑрах...

Коротниђђӗй, Топђински-Попђӗнскисем вырӑнне—Иетӗрнери пӳрократсем... Хлестакков вырӑнне пулмалли—унтан темиҫе хут та иртерег. Пит матур кађђӑ. Пӗр сӑмахпа, XIX мӗш ӗмӗрте Н. В. Кокӑљ пулман пулин—XX-мӗш ӗмӗрте ун вырӑнне епех пулӑттӑм пулӗ, епех утланса ларнӑ пулӑттӑм клаҫҫӗксен тенкелӗ ҫине...

Есӗр кулаттӑри? Ҫук. ан кулӑр! Малалла макӑрмалли те тупӑнӗха. Труках нимӗн урлӑ та сиксе каҫса кайма ҫук вӗт. Акӑ, паллашӑр ӗнтӗ манӑн нихӑҫан та ҫырас ҫук кометин сотершанипе... (Кӗскен ҫеҫ пӗлтеретӗп, пурпӗрех ку темӑна Кокӑљ ҫырнӑ!)

* * *

Пӗр илемлӗ ирпе, тӗрӗс калас тӑк—нойапӗрӗн 11-мӗшӗнђе Иетӗрне райкомолне илемлӗ питлӗ-куҫлӑ илемлӗ кађђӑ кӗрсе тӑнӑ. Пӗрик хутђен сывлӑша шӑршлакаласа пӑхнӑ та, ответлӑ ҫекретар пӳлӗмне кӗрсе, тӳрех хӑй кам иккенне пӗлтернӗ:

— Епӗ, Филиппӑв Виҫҫилий Петрођ, комсомолӗс. Калас пулат̆-песрапотнӑй кађђӑ. Манӑн спетсиаљнӑҫ—налук ӗҫӗ Ҫеменӑвски районра (Ђулхула кӗпӗрни) килнӗ. Акӑ токкументсем... По шалстӑ—ӗҫ тупса парӑрђӗ есӗр мана, по линии комсомол йӗркипе, так ска-ат̆.

Райкомол ҫекреттарӗ, хӑйӗн толшнӑҫӗ тӑрӑх пӳрократисӑма йӳратманскер, пӗрре ҫӑвар туллин сурнӑ вӑхӑтра тенӗ пек, илемлӗ кађђӑн илемлӗ пиђетсем пуснӑ хуђӗсене пӑхса тухнӑ та, тӳрех телехвон трупкине ҫавӑрса тытнӑ:

— Алло, профсойус! Райкомол калаҫат̆. Ђӗнӗрха.. Кам унта сирӗн аслӑраххи? Акӑ мӗн: пирӗн патра ӗҫсӗр комсомолӗс пур. Матур кађђӑ. Теме те пултармалла.. Тӗп спетсиаљнӑҫӗ—налук ӗҫӗ. Мӗ-ӗн? Вырӑн ҫук тетӗр!? Есӗр мӗн.. Райкомолпа сђитатсӑ тӑвасшӑн мари? Нет, нет, апла йурамаст̆... Е-ех, калаҫатӑн ес! Унӑн токкумӗнђӗсем пӗр кун вуламаллӑх ҫитмелле.. Шанђӑк пур, пур. Вырӑн тупасах пулат̆. Пур тетӗн? Налок инҫпектӑрӗ? Вӑл та аван! Халех пыратпӑр.. Йурат̆, йурат̆!

Тулли уйӑх пек ҫутӑлса кайнӑ ҫекреттарӗн пит-куҫӗ. Усӑллӑ ӗҫ вӗт—комсомол хушшинђи ӗҫсӗрлӗхпе кӗрешетпӗр!

... Кӑнтӑрла иртсен илемлӗ ирпе райкомола ӗҫ шыраса пынӑ илемлӗ кађђӑ Иетӗрне райӗҫтӑвкомӗн налук инҫпектӑрӗ пулса, та тӑрат̆. Пит аван ӗнтӗ, пӳрократисӑмсӑр-мӗнсӗр, калама ҫук хӑвӑрт.

* * *

Райӗҫтӑвкомшӑн та савӑнӑҫ пысӑккӑ. Аптранӑ пулнӑ налок инҫпектӑрӗсӗр. Ӗҫлекен кирлӗ—тупма ҫук. Акку ӗнтӗ Саваоф муђи пӗлӗт ҫинђен райӗҫтӑвкома ырӑ сунса налок инҫпектӑрӗ пӑрахса панӑ пекех пулђӗ. Ҫакӑр ҫук ђух суххари те тутлӑске..

Пуринђен те ҫӗнӗ инҫпектӑра увашени: Миркӑрӑтри (ах, хӑйамат, Иетӗрнери темеллеђђӗ!) ђынлӑ ҫынсем ӑна инҫетрен иртсе пынине курсанах ҫӗлӗкӗсене хывса кӑвапа таран тенӗ пек пуҫӗсене тайнӑ...

(Вулакан! Калаха: «Ревисор»-тинђен мӗнтен кайа, е?)

* * *

... Хӑшпӗр токлатђӗксем пӗр калама тапратсан пин ҫухрӑм тӑршшӗ токлат тума та хатӗр. Анђах темле усал токлатђӗке те пӗрик усал саппискӑ ҫырса парсан ђарма пулат̆.

Вӑхӑт—апла мар. Вӑхӑт малаллах шӑват̆, ӑна ђарӑн! тесе пин саппискӑ ҫырсан та усси ҫук. Малаллах шӑват̆, мур...

... Сисмесӗрех теккапӗрӗн 15-мӗшӗ персе ҫитнӗ. Ӑнта . ҫитнӗ ҫав. Вӑл 15-мӗш теккапӗр 1929-мӗш ҫулта вуҫҫех пулман пулсан авантарах пулӗђђӗ-и тен! Мӗншӗн тесен теккапӗрӗн 15-мӗшӗ пӗтӗм Иетӗрнери мӑн портфӗллӗ халӑха ђӗтрентернӗ... Вӗсем ку кун Кокӑљ пйессинђи коротниђђӗйсем, пођтеймейҫтӗр, Ҫемљаниккӑсен рољсене ирӗксӗрех выљанӑ.

Ку ирсӗр кун—Иетӗрне райӗҫтӑвкомӗнђе пӗр уйӑх хушши налок инҫпектӑрӗ пулса пурӑннӑ илемлӗ кађђӑ (илемлӗ шулӗк, тейӗттӗм епӗ) Иетӗрнерен хӑйӗн тӗпсӗр кӑсйене укҫа тултарса тухса тарнӑ... Никам та сисмен, никам та пӗлмен.



— Пилӗк хутђен ӗнтӗ сорттировккӑ патне килтӗмӗр. Памастӑр. Мӗнлеха ӗнтӗ капла пирӗн... малалла.
— Шут йӗркине мантӑри. Пилӗк хыҫҫӑн ултӑмӗш хут килмелле.

— Хурах! Хурах!
— Кă-ра-ву-ул!
— Çаратнă пире-е!
— Налок инçпектăрĕ пулман вăл, пит те пултаракан аферис (шулĕк) пулнă çеç.

Çухăрат̆ Иетĕрне... Портфĕллĕ çынсем пĕрпĕрин патне сĕрĕм тивнĕ сурăхсемле ђупаççĕ, телехвон шăнкравĕсĕм çурăлса кайас пек шăнкăртаççĕ...

— Шырас!
— Тупас!
— Тытса хупас!
— Улталанă пире, шăхăртнă!
— Хурр-а-ах!
— Милитси, лашасем çине!
— Аррестова-ат̆!

Урлă та пирлĕ ђупнă, çăвартан сĕлеке йухакан пулиђђенех шыранă. Хашхăлнă. Аптранă. Супнă...

Пурпĕрех—тупайман.

Хваттерĕнђе йулнă хутсем çакна çеç пĕлтернĕ: вăл илемлĕ кађђă Филиппăв хушаматлă мар, Пуйанăв хушаматлă пулнă.

* * *

Иулашки стсенă: Иетĕрнери мăн потфĕллĕ етемсем пурте пуçĕсене уснă. Хуйхăраççĕ. Илемлĕ шулĕк мĕн ђухлĕ укçа вăрласа кайнине шутлама тапаланаççĕ, анђах шутласа кăлараймаççĕ, мĕншĕн тесен вăл (шулĕкĕ ĕнтĕ) йалсем тăрăх нумай укçа пухса çӳренĕ.. Кам пĕлет, тен темиçе пинех шăхăртнă пуԓ.

Пĕр-пĕринпе пĕр сăмах та калаçмасăр, хуллен саланаççĕ...

Ђаршав хупăнат̆.

Леонит Акаккăв.

ВОЛОКИТЂЁК.

— Пирĕн йала пырса çураки токлатне туса парха·
— Малтан 3 екçемплђар сайавлени çырса пар. Сайавлени çумне хăварăн, тата арăмусăмпе ађу-пăђусен токкумĕнђĕсене çĕлесе парăр. Унтан тепĕр ернерен килсе пăхăр.

Кулăш такмакĕ.

Авалхи майлă

— Иăван, айта хысна ваԓԓи вăрман касма.
— Вар ыратат̆.
— Иăван, айта вăрман вăрлама.
— Аçтађђĕха çав ман пуртă—çивĕђђи.

Çураки кампнани пуçламĕш.

— Пур çĕрте те çуракине вирлĕнех хатĕрленеççĕ — вăрлăхсем суртлаççĕ... Пирĕн нимĕн те çук. Çывăраççĕ штоԓ?..
— Çывăрмаççĕ-çке. Хуларан ђиркуԓар илессе кĕтеççĕ.

Кулак.

— Вăрман хатĕрлемелли камппани пуçланат̆ тенине илтсен, лашама сутса йатăм. Халĕ калаççĕ: вăрман хатĕрленĕ ђухне кулаксем çине нумайрах тиемелле, теççĕ. Мĕнле туртасха лашасăр. Хамăн патрака кӳлмелле пулат̆ пули анђах.

Вăрман уйăхлăхĕнђе.

— Мĕншĕн сирĕн районра çав тери сахал хатĕрленĕ йуман?
— Мĕншĕнни ара .. вăрман хатĕрлекенсен пуçĕсем йуман пулнăран.

Иалсовет ђленĕ пулнă çын.

— Мĕншĕн сана, Куçма, йалсоветран хăваларĕç?
— Мĕншĕн тесен хам епĕ хăваланă... самоконккă.

Кумăш пирки.

— Сирĕн йалсовет претçеттĕлĕ ма колхоса куçмаст̆. Кăçал çуракинђе те куçмасан хăçан куçĕха апла вăл?
— Иерхип Павăлĕ вилсен куçма шухăшлат̆.
— Ма ун ђухне тин?
— Ара вăл Иерхип Павăлĕпе кумаллă та, колхоса куçсан, кумми çиленесрен хăрат̆.

Шеф ушкăн ђленĕ.

— Анне, ма ес мана ђĕлхесĕр туманши?
— Ай-уй! Мĕн калаçан?
— Ђĕлхесĕр пулнă пулсан йала колхос уçасси çинђен токлат тума йамасђĕç.

Машшинсен тирпейлĕхĕ.

— Пирĕн акроном уђасткинђе çураки ваԓԓи пурте пур.
— Пурте пур мар çав.
— Мĕн çук вара санăн шухăшпа?
— Тирпейлĕх.

Шкулта.

Уђиттĕл ыйтат̆:
— Çурхи калђассне сийен кӳрекен хурт-кăпшанкăсен йађĕсене калаха? тет.
— Хурт, нăрă, ерешмен, тата пуп молепĕнĕ, тет ађа.

Нумӗрлӗ хутсем

Ӑслӑ хут.

Каллех хут пӗлменнисене хут вӗрентесси ҫинђен, унпа пӗрлех клас ҫулйӗрӗ ҫинђен.

Ђаканар йалсовеђӗ (Шуп. р.) 219-мӗш номӗрлӗ хутпа Ыраш пулӑх ҫынни—Петров кулак ҫине „ҫиленнӗ“ те, суйа ӗнентерӳ туса панӑ:

> Пред‘явитель сего г-нин дер. Ыраш-пулхи Чебок. р-на АЧССР Цетрову Григорию Петровичу, год рожден-я 1901 г, семейное положение бедняка, холост, сотциальное положение средняка, род саняти хлебопашеством. Что и выше ислошенное Чиганарский СИК удостоверяет.
>
> Пред СИК **Черников**
>
> Секретарь **Яковлев.**

„Семейное положение - бедняка, социальное положение—средняка. .“ Имущественное положение—пат, акка пуђ... Капкӑнски „полошенине“ илсен кулакка пулат пуђ. Ӑслӑ хут туса панӑ есӗ, Ђаканар йалӗҫтӑвкомӗ! Ҫав ӑслӑ хута туса панӑшӑн хӑварӑн прихутри Ишек ђиркӳ тӑрне хӑпартса лартас сана - пасара пыракансем тӗлӗнђӗр.

Ҫавӑрӑннисем.

Хӗвелҫамӗш тени кирек йепле сурђӗ те (Потанӗк инҫтиттуђен Капкасри уйрӑмӗнђе ҫын ҫӳллӗшӗнђен ик хут ҫӳлӗрех ӳстерсе тунӑ сурђӗ те) хӗвел майлӑ ҫавӑрӑнат. Ҫав вӑхӑтрах Емпӗрт-Туҫа йалӗнђи (Ҫерпӳ рай.) вулав ҫурђӗ пуҫлӑхӗ К. Филиппӑвпа шкул пуҫлӑхӗ Ҫеменӑв волоккиттӑ йенелле ҫавӑрӑнаҫҫӗ. Иккӗшӗ пӗр ҫуртрах пурӑнаҫҫӗ пулин те пӗр-пӗрин патне ҫакӑн пек хутсем ҫыраҫҫӗ:

> *„Заву Имбюртской школы*
>
> Захарова как член Осоавиахима выбрана на райконференции Осоавиахима делегатом, а потому прошу не задерживать.
>
> Отв. сек. парт. ячейки ВКП(б) **К. Филиппов**
>
> 20.Х-29 г.

Шкул пуҫлӑхӗ Семенов:

> „Получено 8 часов 30 минут, исполнено в 8 час. 35 минут того же дня.
>
> Зав. Имбюртской школой **М. Семенов**“—

тесе ҫырса парат.

Кӑштах тӑхтасан ку ҫынсем кӑнтӑрлахи апат ҫиме килсен те арӑмӗсене (йе амӑшӗсене) „прошу отпустить обед на одного мужа“ тесе номӗр лартса отношенисем ҫырса парӗҫ. Волоккиттӑ йенелле ҫавӑрӑннисенђен темӗн те кӗтме пулат, теҫҫӗ.

Куҫлӑх, сутйе, тата 44 ҫын.

Куҫлӑх кирлӗ ӗнтӗ Халӑх сутйине те куҫлӑх кирлӗ пулнӑ. Елек районӗн халӑх сутйи Соловйов И. С. (халӗ Хӗрлӗђутай районӗн сутйи) суг саҫҫетанине пынӑ саҫҫетаттӗлсене ҫакӑн пек проттоккол йышӑнтарат:

СЛУШАЛИ:	ПОСТАНОВИЛИ:
Доклад нарсудьи Соловьева И. С. „о необходимости поездки в г. Чебоксары для приобретения очков для занятия, без которых заниматься не в состоянии, а имеющиеся таковые устарели, а потому угрожает опасность зрению глаз и по делам службы в НКЮ и переложениевзаседания суда назначенные на 26 27 сентября на другие числа.	Поездку нарсудьи т. Соловьева в г. Чебоксары по указанным причинам признать уважительной и заседании суда назначенные на 26-27 сент. перенести на 3 октября и 27 сентября на 4 октября о чем оповестить вызванных на 26-27 сент. 29 года.

Пред. судья **Соловьев.**

Заседатели **Трофимов, Кручинин.**

Сутйе куҫлӑх илме Шупашкара кайасси ҫинђен ҫав кунсенђе сута пымалли 44 ҫынна хут йарса пӗлтермен, сута пухӑннӑ халӑхӑн, сутйи куҫлӑх патне кайнӑ пирки, ӗнсисене хыҫкаласа тӑрсан килӗсене тавӑрӑнмалла пулнӑ.

Мунђа кӗни ӗнер анђах пулнӑ пулсан та, ӗнсене хыҫмалли пулат вӑл. Халӑх сутйи хӑй ӗнсине хӑй хыҫаймаст (вӑхӑт ҫукран пулмалла). Ҫавӑнпа унӑн ӗнсине хыҫса йама Иуҫтитси Комиссариатне хушмалла.

Ӑшӑтаҫҫен.

— Претҫетаттӗл йулташ, вӑрлӑх тасатмалли машшика йур айӗнђен кӑлармалла.

— Тӑхта халӗ. Тулта сивӗ,—ӑшӑтсан та ӗлкӗрӗпӗрхе.

— Ӑшӑтасси нумайах йулмарӗ ӗнтӗ. Ыран-пайанах районрисем ӑшӑтса йарассине кӗтсех тӑмалла.

Шупашкар супотнӗкӗ.

Шупашкарсем йанварӗн 22-мӗш ђислинђе тунӑ вӑрман супотнӗкне теме пӗрпӗр ђӑхха илсе пыман. Илсе пымаллах пулнӑ мӗн. Виантот ӑранти мар, ахађ ђӑхӑ та йурамалла, мӗншӗн тесен ахађ ђӑхӑ та ахӑлтатсах кулма пултарат—пысӑк ерттел (20-30 ҫын) ик-виҫ пуртӑпа, икӗ пӑђкӑпа вӑрман касма тухнине курсан.

Супотнӗк аван иртӗнсе карӗ, йӑвӑҫсем... аванах иртӗнеймерӗҫ.

КРОЛЁКСЕМ ХУШШИНЂИ „ТЕТСЕМ“.

Хусанта кӗҫҫе йӑвалакан пысӑк хапрӑк тума пуҫлана. Ку хапрӑкра ҫулталӑкра 750 пин мӑшӑр ҫӑматӑ, тата 150 пин метӑр кӗҫҫе йӑваласа кӑлармалла. («Канашӑн» 15-мӗш №-рӗ).

Иулашки вӑхӑтра ђӑвашсене патшалӑх аппаратне хутшӑнтарас ӗҫ малалла мар, кайалла сулӑнни сисӗнет. Сӑмахран, Тӗпӗҫтӑвком хайӗн 1928-мӗш ҫулхи йанварӗн 12 мӗшӗнђе кӑларнӑ постановленинђе республӗкри аппаратра ђӑвашсемпе ђӑвашла пӗлекенсем 61 прођђӑна вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ тенӗ. Хађ епир вӑл хисеп 57.2 прођђӑн ҫитиђђен ђакса ларнине куратпӑр— («Канашӑн» ҫав номӗрех).



— Хусанта кӗҫҫе хапрӑкӗ лартаҫҫӗ, тет.

— Ха, ҫывӑхрах пулаћ-ҫке. Апла пире те кӗҫҫе сарса параҫҫӗ пуљ.

— Ҫук ҫав. Ана аппарата ђӑвашлатма тӑрӑшман пуҫлӑхсене пиђӗсене кӗҫҫе ҫӗлеме лартаҫҫӗ, тет. Хӑвах шутла—сахалах кирлӗ мар вӗт.

Инструктӑр прођђӑнӗсем.

— Ах, шут йево воҫми! тесе Хӗрлӗђутай р. тӑрӑх ҫӳреме тухас умӗн, Хӗрлӗђутай РӖК-ӗнђе ӗҫлекен Кӗнђђељарӑв, тӗкӗр тӗлне тӑрса „фиксатур“ текен маҫӑпа ҫӳҫне шӑлса йакатса илђӗ те, сылтӑм хӑлхи ҫунаттине тытса анасласа илђӗ.

Ађа лайӑх: кӗлетки-ҫурӑмӗ йаштак, вӑрӑм; ҫӳҫӗ сарӑ, куҫӗсем кӑвак, паљттопа.. анђах портфӗл тенӗ ҫумҫакки ҫук. Мӗн тӗвас? Ҫула тухас ђух алӑра портфӗл ҫукки, кӳлсе тӑратнӑ лашанӑн тилкепи ҫукпа пӗрех Кӑнђђељарӑв шуђӗпе.

— Каймалла ҫын патне!.. Тупасах пулаћ... Кой-какой та пырӗ, тољккӑ портфӗл пултӑр,—тесе ҫав саманрах таҫтан йӑтса пыђӗ портфӗл. Хӗрлӗђутайри йалпулӑшкомӗн столовине ҫитсе пӗр кило ҫӑкӑр, 400 крам колпасси илсе портфӗле ђиксе „шӑкӑлт“ тутарса питӗрђӗ.

— Ну, аћа!. Ҫилҫуналла хӑвала лашуна—терӗ йамшӑкне.

Карӗҫ...

Лаша пыраћ тулхӑрса, ҫуна „кант, тан!“ тукаласа йӑтӑнсах вӗҫет малалла. Тӳлек, лӑпкӑм ҫанталӑк пулин те, ҫуна хыҫӗнђе пӑтранђӑк ҫилтӑвӑл—хытӑ пыраҫҫӗ...

— Стоп!. Турхана ҫитрӗмӗр... Вулав ҫурђӗ пуҫлӑхне хушусем парас пулаћ,—тесе сиккелесе кӗрсе карӗ.

— Пур-и испађ?.. Ӑҫта кайнӑ?.. Тупӑр, „петменталђнӑ“ ђӗнсе килӗр! тесе хушу пађӗ. Кӗтет...

— Ах, шут тери!.. Мӗнле хушу хӑвармаллађђӗ-ха?.. Ес асӑрхамастӑни, йулташ? тет йамшӑкне.—Ну, всеравно... 20 прођђӑн таран пулӑшкомри вӑрлӑх тырӑ фонтне пуҫтармаллах,—тесе руђкӑ тытса перо вӗҫне нӑйкӑштарма пуҫларӗ. „Кивҫен салатнӑ тырӑ-пулӑсене пухса пӗтермелле; 20 прођђӑн вӑрлӑхлӑх тырӑ пухмалла“ тесе ҫырса хуђӗ.

— Ҫапла, ҫапла... срођнӑ пухса ҫитерӗр! тесе хӑварђӗ.

Пуху... Халӑх ђылай, анђах нумайӗшӗ ҫывӑраҫҫӗ.

— Малашне пухусене шкул пӳлӗмӗнђе тӑвас ҫук, мӗншӗн тесен, парттӑсем хушшинђе халӑх ђасах ыйхӑлаћ... Пуҫӗсене хурсах ҫывӑраҫҫӗ... тет пӗри.

— Ма ҫывӑрас мар?..—Вырӑнӗ канлӗ,—тет тепри.

— Тӑратӑр, ма ҫывӑраҫҫӗха, ей?.. тет тепри.

— Иулашки ыйту, 6-мӗш ыйту!—тет преҫитиум.

— Ку ыйтупа ак мӗн каламалла.. РӖК-рен уполномођӗннӑй килсе „петменттаљнӑ“ 20 прођђӑн вӑрлӑх фонђӗ пуҫтарса пӗтерме хушрӗ.

— Йышӑнас, калаҫмасӑрах йышӑнас; тет пӗри.

— Тӑхтӑрха, мӗлле 20 прођђӑн?.. Мӗлле хисепрен?

— Вӑрлӑхлӑх тырра 100 прођђӑнпех 2 ерне ытла уш калла пухса суртласа хутӑмӑр,—тет пулӑшком пуҫлӑхӗ.—Мӗн 20 прођђӑнӗпе калаҫаҫҫӗ унта?...

— Татах пуҫтармалла пулӗ?.. Мӗлле хисепрен ку 20 прођђӑн?. Кашнӑ хуҫайствӑра пухӑннӑ тырӑ пулнӑрани, фонта пухса хунӑ тырӑ-пулӑ хисепӗнђени... Ӑҫтан?..

Калаҫрӗҫ, шакӑлтатрӗҫ, анђах ӗҫ тухмарӗ: 20 прођђӑн мӗне пӗлтернине никам та ӑнланаймарӗ.

Пӗлес килет—Кӑнђђељарӑв йулташ кун пек прођђӑнлӑ калаҫусем нумай ҫӗртре тунӑши?

Уполномођӑннӑй йатне ҫӗклесе ҫӳренӗ вӑхӑтра Кӑнђђељарӑв хушусене тӗплӗн ӑнлантарса парса хӑварассине пур ҫӗртре те маннӑши?..

Калай.

Илемлӗ ресолюци илемлӗхӗ

„Кукӑр ура“ йатлӑ йалти ҫураки кампанийӗ сӑмса умнех пырса тӑрӑннӑ. Йалӗҫтӑвком претҫетаттелӗ кун пирки кӑнтӑрла ҫывӑрмасӑр, каҫхине апат ҫимесӗрех пурӑннӑ. Ӑнланмалларах ҫӗлхе ҫине куҫарса каласан „вӑл нимӗн те туман“ тени пулать.

Ҫапах та пайанхи кун Тӳткӗн, вӑлах йалӗҫтӑвком претҫетаттелӗ, тата сӑмакунӑн ҫи ҫывӑх тусӗ тарӑн шухӑша карӗ.

— Ӑн-та—тенӗ вӑл хӑйӗн мунҫала сухалне салхуллӑн турткаласа:—ӑн-та.. мӗнле те пулин ӗҫ тумаллах пулать. Ҫын куҫ умне курӑнтӑр хӑть. Унсӑрӑн тата пӗҫертме те пуҫлӗҫ?

Тӳткӗн икӗ пӗкӗ пек авӑнса темскер ҫырса ларакан ҫекреттар патнелле ҫавӑрӑнҫӗ те:—мӗнте пулин тумалла тетӗп, терӗ.

Ҫекреттарӗ пуҫне ҫӗклемесӗр Тӳткӗн сӑмахне ҫирӗплетрӗ:—ан-та, ӑн-та... Тумаллах ҫав. Тӳткӗн сухалне пурнисемпе туракаласа:

— Ҫапла. Мӗн тӑвӑпӑр-ха епӗр?—терӗ.

Ҫекреттарӗ кулкаласа, тӗлӗннипе:

— Мӗнле мӗн тӑвӑпӑр? Мӗнле мӗн тӑвӑпӑр тетӗн есӗ? Акиттатси тумалла, ӑна турӑнтӑк, ҫитрӗ.

Претҫетаттелӗ хирӗҫ сӑхса илнӗ пек:

— Акиттатси мӗн вӑл, ӑна пур ҫӗртре те тӑваҫҫӗ. Пирӗн мӗн те пулин кирлӗрех ӗҫ тӑвасҫӗ..

Ҫекреттарӗ ҫернилпа вараланӑ руҫкипе аллисене суллакаласа:

— Мӗскер кирлӗреххи кирлӗ. Пуху пухса акиттатси тӑвар та ҫитрӗ.

Тӳткӗн ӗнсине хыҫкаласа илҫӗ те:

— Вӑл ҫапли ҫаплахтаха, анҫах...

— Есӗ, Проф Луккиҫ, пӑрахха кирлӗ мара калама. Халӑх сахал пухӑнсан, ну сӑмахран пӗр ҫӗраллӑ ҫын ҫеҫ пухӑнсан, проттоккол ҫинҫи ҫыхвӑр ҫине сулахай йенҫен пӗр патак лартса хурӑпӑр та—нумайланӗ.

Каҫхине халӑх пухӑва кахаллӑн пухӑнҫӗ. Ку каҫ праҫнӗк умӗнхи каҫ пулнӑ. Нумайӗшӗ мунҫа кӗрсе тухнӑ хыҫҫӑн хӗрлӗ кӑшман пек хӗремесленнӗ сӑн-сӑпатпа пыҫӗҫ.

Тӳткӗн сӑмси тӑррине хыҫкаларӗ те:

— Ҫӑра мар, питӗ ҫӑра мар вара халӑхӗ. Тем пухӑва ирттерсе пулати вара,—терӗ те хурланҫӑклӑ куҫӗсемпе алӑк патӗнҫи тӗттӗм кӗтесе кахаллӑн тӗллесе пӑхрӗ.

Ҫекреттарӗ ҫейе куҫӗсемпе йӑлтӑртаттарса, сӑпайлӑн кулҫӗ:

— Иртеретпӗрех пулмалла, Проф Луккиҫ, пирӗн пуҫсене тимӗр шуҫран туман пек-теха... Проттоккола илемлӗрех ҫырса хурса РӖКе ӑсатӑпӑр. Унта: „акмалли вӑрлӑха тата урӑх тӗрлӗ сӗлле тасатасси ҫинҫен пуху пухса ирттертӗмӗр“, тесе ҫырӑпӑр та, йулашкинҫен пӑнҫӑ лартса хурӑпӑр. Кайран вара, пирӗнпе ан та калаҫ.

Шавлакан мушиксем ҫӑварӗсене каркаласа анаслама пуҫларӗҫ:

— Мӗнлеха апла, Проф Луккиҫ? Ҫас пуҫланатши? Пӗр сехет хушши кӗтетпӗр ӗнтӗ.

Ҫекретгарӗ йерипен шӳт тукалама шухӑш тытрӗ:

— Ытла пӗр сехетех мар та ӗнтӗ, пӗр утмӑл минут кӑна кӗтеттӗрҫке.

Анҫах вӑл шӳт туни пулӑшмарӗ. Пухӑва туса ирттереймерӗҫ.

Ҫапах та ҫекреттарӗ суйа проттоккол ҫырса РӖК а йаҫӗ-йаҫех.

— Иурӗҫке, никамах та тӗрӗслесе пӑхмӗ, терӗ хӑйне хӑй лӑплантарса хавасланҫӗ.

— Ресолюцине йепле ҫыпҫӑнтарса хутӑм, такам та мухтамалла.

Ҫекреттар ресолюцийӗн савӑннӑ вӑхӑтра выранти лавкаҫ Стопутӑв та савӑннӑ.

— Хе, хе, хӗ, тӗлӗнгереҫҫӗ ҫынсем... Мӗне кирлӗ вӑл сирӗн сортировккӑ йе тата вӑрлӑха формалин шывӗпе ҫӳхени,—тенӗ вӑл, хӑйӗн хӗрех витре кӗрекен кӗлеткине ҫемҫе тӗклӗ кӗрӗк ӑшне пытарса.

Панкрат ҫӑтаймасӑр кулса йаҫӗ:

— Пире тасатнӑ вӑрлӑх мар, леш тасатни „ҫутти“ нумайтарах пулсан та пыраҫҫӗ.

Стопутӑв Панкрат ҫинелле пӑхса куҫне хӗсрӗ те:

— Хе-хе хе, мӗн тӗрӗсси... тӗрӗсех ӗнтӗ вӑл. Вӑрлӑх тасатас ӗҫӗн хакӗ виҫӗ пусран та йӳнӗрех ӗнтӗ.

Каҫхине Панкрат таҫтан ҫӑва патӗнҫен тухса Стопутӑв патне кайса лекнӗ вара, паллӑ мар. Сӗтел ерех пулӑштавӗсене пушатсах пынӑ. Пулӑштав кӗленҫисем ҫакса пынӑ ҫемӗн, пуҫра хӗрӗнкӗ хутшӑнсах пынӑ.

Панкрат тӑрса тайкаланҫӗ:

— Есӗ ан кулюан, лӑплан! Вӑрлӑх тасатассине хирӗҫ каласа ӑнлантарма тытӑнсан, ҫӑварна карса пӑрахӑн! Иалсоветне тӗк-мамӑк пек вӗҫтерсе йарӑпӑр.

Стопутӑв ерехне тултарсах тӑнӑ.

— Ара мӗн калаҫмалли пур унта. Пӗлетӗп вӗт сана есӗ маххӑ парас ҫуккине... Карҫӑксене йал тӑрӑх сарма хуш ҫеҫ.

Ӗҫсе кӳпнӗ Панкрат мӑркӑлтатрӗ:

— О! Епӗ ӗнтӗ.. О, епӗр ӗнтӗ...

Стопутӑв куҫӗсемпе ҫейен хӗссе:

— Вӗсем пире паттентпа, епӗр те вӗсене урӑххипе ҫыртма пултаратпӑр. Вӑрттӑн, сисеҫҫен ҫыртӑпӑр.

Панкрат ӳсӗр ҫӗлхипе:

— То-ттӑ, пӗл епӗр камне!

Ирхине Стопутӑв Панкрата мухмӑр ҫӗртмеллӗх тултарса парса:

—Никам та пӗр пӑт вӑрлӑх ан тасатнӑ, ан ҫӳхенӗ пултӑр. Смотрей хамӑр прокраммӑна ан пӑс.

Панкрат унпа килӗшсе пуҫне лӑканӑ.

Стопутӑв хайарлансах пынӑ:

— Аван тырпул выранне мӗнле те пулин йапӑх тырпул пултӑр. Епӗ уншӑн пӗртте хуйхӑрмастӑп, ман патах пулӑшу ыйтма килеҫҫӗ.

Панкрат, ҫакак пулкки пек хӗрарӑмсем пухӑнакан йалти ҫӑл кутнелле вӗҫтерҫӗ.

Ҫитсенех, ҫивӗҫ куҫлӑ Матрӳнене шӑлне йерсе:

— Халь витресем ҫӗклетӗн, кӗҫ-вӗҫех ак тырӑ миххисем ҫӗкле пуҫлӑн.

Лешӗ тӗлӗнҫӗ.

— Мӗнле михсем тетӗн ес?

— Так ахаль михсенех, тасатмалли вӑрлӑх михӗсене.

— А-а...—терӗ ҫасса Матрӳне.—Йурӗ ҫӗклемелле пулсан ҫӗклӗпӗр. Вӑл тырпул лайӑхрах пулассин йенне.

— У-у-х-мах... терӗ ҫилленнӗрех пек пулса Панкрат.—Пӗлместӗн ҫав ес, ҫак совет ҫулйӗрӗ ҫталла пӑрса кӗртнине. Тутине Матрӳне хӑлхи патнерех илсе пырса шӑппӑн:—Суртланӑ вӑрлӑха ҫеҫех туртса илеҫҫӗ вӗт.. терӗ те айаккалла ҫавӑрӑнса пӑхрӗ.—Сыхлан!.

Халлапҫӑ Тарйене курсанах Панкрат Матрӳнепе сывпуллатса уйӑрӑлҫӗ.

— Ну покка... Асту хӗрхенсе каларӑм.

Тарйе патнерех пырса интересленнӗ пек пулҫӗ:

— Мӗнле-ха, ывӑлу пурӑнати, сывӑи?

Тарйе ҫил арманӗ пек ҫунатланса:

— Аван, сывӑ.. Каҫака пек! Есӗ мӗншӗн ун ҫинҫен ыйтатӑн тата

Панкрат йӑвӑррӑн сывласа:

— Хӑратӑп епӗ, вӑл сан каҫака пек сикме пуҫламасан йурӗҫҫӗ, йе вуҫех сикме ҫарӑнсан.

Тарйе тӗлӗнҫӗ.—Ку тата мӗншӗн?

— Есӗ вӑрлӑха формалин шывӗпе ҫӳхесе акатниха?—терӗ Панкрат кӗтмен ҫӗртен.

— Унсӑрӑн мӗнлеха, ҫӳхесе пӑхас.

— Ан та шухӑшла. Формалин вӑрлӑхшӑн наркӑмӑш пек сийенлӗ. Ҫав формалин пиркийех хӑвӑн пурнӑҫна та пӗтерме пултаратӑн.

Тарйе аллисемпе ҫунатланса:

— Мӗнле апла вара вӑл?

— Ҫапла, терӗ ҫирӗппӗн Панкрат.

Тарйе пуҫне усрӗ.

Ку сӑмахсем ҫиркӳллӗ йал тӑрӑх, ҫан ҫапнӑ сасӑ пек сарӑлҫӗҫ. Теприсем вӑл сӑмахсем ҫумне ҫӗнӗрен сӑмахсем хушса татах хӑрушлатнӑ.

Вӑрлӑх тасатас текенсен шуҫӗ ҫаксах пынӑ. Вӑрлӑх тасатакан опос пырсан, пӗр пӗҫӗк ушкӑн (ҫухӑнсем) ҫеҫ тасатрӗҫ. Ыттисем нихӑшӗ те тасатасшӑн пулман

Ҫухӑнсем хӑйсен пускилӗсене:

— Ан ӗненӗр пустуй сӑмаха, тасатӑр, мӗншӗн тасатмастӑр, тесе ӳкӗтленӗ

— Кӑштах тӑхтаса пӑхарха, малалла мӗн пулӗ, тенӗ хӑшпӗрисем. Теприсем кулкаласа:

— Пӗлетпӗр епӗр, есир пире мӗншӗн тасаттарасшӑннине, тенӗ куҫӗсене хӗссе.

Вӑрлӑхсене сахал тасатнӑшӑн Стопутӑв савӑннӑ. Панкрат ун укҫипе ӗҫсе ӳсӗрӗлсе ҫӳренӗ.

Вӑхӑт кунран кун малаллах шунӑ.

Суртласа тата формалин шывӗпе ҫӳхесе акнӑ вӑрлӑхлӑ анасем ҫинҫи калҫана хресҫенсем кӗвӗҫӳллӗ куҫсемпе пӑхнӑ.

Мушиксем, Панкрата суйа сӑмах сарнӑшӑн шаккама пуҳӑннине пӗлетӗп, анҫах вӗсем ӑна мӗн те пулин туни туманнине пӗлместӗп.

Тепӗр ҫулах Куккӑрура йалӗ совет ури ҫине тӑнине те аван пӗлетӗп, мӗншӗн тесен вӑрлӑха тасатнипе пӗрлех, кулаксен сӗрӗмӗнҫен тасалса пурте пӗр сасӑпа колхос орканисатсилемелле, тесе постановлени йышӑннӑҫҫӗ.

Ҫиккун в В.

Пӗр тӑрук сарасшӑн.

— Сирон йалсовет 3-мӗш интустри сайомне сарас тӗлӗшпе ма наҫар ӗҫлет?

— 4-мӗш интустри сайомӗ кӑларасса кӗтеҫҫӗ.

Усланкка.

Колхос ӗни.



— Мӗншӗнши мана ӗне тынӑха. Мана мар ӗне темелле Колхоса куҫма васкаман етексене ӗне темелле.

Тулӑпа пукра ҫинҫен калакан йумах.

Унтан вара „Кӑпкӑн“ хуласем, йалсем тӑрӑх ҫураки ҫинҫен каласа вӗрентсе ҫӳренӗ. Унпа пӗрле вуникӗ сотрутнӗк те пулнӑ. Ун патне халӑх пит нумай пухӑнсан, пур йалсенҫен те, колхоссенҫен те ҫынсем пырсан, вӑл вӗсене йумахпа кала пуҫланӑ:

Клас кӗрешӗвӗ хӑй хирне таса вӑрлӑх акнӑ колхос йевӗрлӗ Колхос ҫыннисем ҫывӑрнӑ вӑхӑтра кулак пырса, тулли ҫине пукра акса кайнӑ. Калҫи ҫитӗнсе пуҫ кӑларсассӑн, пукри те паларнӑ. Ҫыннисем колхос претҫетаттӗлӗ патне пырса каланӑ: йулташ, епӗр хамӑр хире ырӑ вӑрлӑх акманҫӗ-и вара? Пукра ӑҫтан тухнӑ унта? тенӗ. Вӑл каланӑ вӗсене: ӑна кулак тунӑ, тенӗ. Лешсем каланӑ: мӗн тӑвас вӑл кулакпа, тенӗ. Претҫетаттӗл вӗсене: ӑна хытӑрах хӗстерсе пырӑпӑр, ҫухӑнсемпе вӑтамсене талккӑшпех колхоса куҫарӑпӑр, вара кулак сывлайми пулса вилсе выртӗ, кӑҫал пирӗн кулака пӗтермеллех, тенӗ. Ҫакна каланӑ хыҫҫӑн „Капкӑн“ каланӑ: илтме хӑлха пурри—илттӗр, тенӗ.

Ҫынсем ӑна: санӑн сӑмахусене Ҫӗпӗрти ҫӑвашсем те, Вӑтам-Атӑл оплӑҫӗнҫи ҫӑвашсем те, Мари оплӑҫӗнҫи ҫӑвашсем те, тата Совет Сойусӗнҫи ытти вырӑнсенҫе сапаланса кайнӑ ҫӑвашсем те илтесшӗн тӑраҫҫӗ, тенӗ. Вӑл вӗсене хирӗҫ каланӑ: Мана курас, мана итлес текен „Чебоксары, Канашская, 15, Конторе издательства «Канаш»“ текен атрӗспа укҫа йатӑр,—нумай мар,—кашни уйӑхшӑн 10-шар пус йанипе ҫитет, тенӗ.

Вӑл вара хӑйӗн сотрутнӗкӗсемпе ҫилҫуна ҫине ларнӑ та, хирсем урлӑ каҫса, Шупашкара таврӑннӑ. Таврӑнсассӑнах ҫаннисене таврнӑ та хӑйӗн виҫҫӗмӗмӗш номӗрне кӑларма хатӗрленме тытӑннӑ. Кореспонтентсем ӑна пулӑшса пынӑ. Потписҫӗксем куллен-кун ӳссе пынӑ. Кашни потписҫӗк пӗрер-икшер потписҫӗк ҫӗнӗрен тупса „Капкӑн“ патне илсе пынӑ. „Капкӑн“ вӗсене хавасланса йышӑннӑ. Ҫулталӑклӑх илекеннисене „Канаш“ хаҫат туса иртерекен пысӑк выҫав пилеҫӗсем панӑ... пурте хавас пулнӑ.

КУН ПЕК ПУЛАСРАН СЫХЛАНАР!

Советра ĕҫлекен йут шухăшлă ҫын хӳттине кĕрсе ларнă кулаксем.

Ответ. ретактăр самеҫтиттелĕ **К. М. Титтов.**

Чувашлит № 99. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга“. Зак. № 204. Нап. 7800 экз.